72-316



Раиса Сарпи

# ПАРНЕ

# Т у п м а л л и

Пӑла . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Кӳлӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 4
Шӑллӑм ылханӗ . . . . . . . . . . . . . 5
Ӳкерчӗк . . . . . . . . . . . . . . . . . 8
Ҫырлара . . . . . . . . . . . . . . . . —
Тинӗс . . . . . . . . . . . . . . . . . 10
Асанне . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Юмах . . . . . . . . . . . . . . . . . 12
Шурӑ хурӑн . . . . . . . . . . . . . . 13
Капитан . . . . . . . . . . . . . . . . 14
Кӗр-художник . . . . . . . . . . . . . —
Ватӑ ҫӑка . . . . . . . . . . . . . . . 16
Ҫӗнӗ юр . . . . . . . . . . . . . . . . 17
Ҫӗнӗ ҫул туйӑмӗ . . . . . . . . . . . 18
Ҫуркунне ал парать . . . . . . . . . 20
Садра . . . . . . . . . . . . . . . . . 22
Туслӑх хурӑнӗ . . . . . . . . . . . . 23
Пӗччен мар . . . . . . . . . . . . . . 24

С(ЧУВ)
САР 20

7—6—2
86—72м



Государств- ая
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чувашской АССР
КОНТРОЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
„17“ ноября 1972 г.
№ 316

72-516

Раиса Сарпи

# ПАРНЕ

ЧĂВАШ
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР
— 1972





## ПĂЛА

Пăла — тăрна куç евĕр тăрă,
Кашни тумламĕ чăн ахах.
Шăнкăртатса шанкав чул тăрăх
Таçтаваскать вăл яланах.

Юхать, юхать, — ниме пăхмасть вăл, —
Вăй пуçтарса малтан мала.
Сĕве çырми ăна пит хапăл
Илсе тухать мăн Атăла.

Юхать мăнаç Çĕршывăм тăрăх
Хăватлă Атăлăм — атте.
Пăлам, пĕчĕк пулсан та тăрăш,
Çĕкле мăн Атăл хăватне.





## КӐ̆ЛĔ

Ярӑм-ярӑм сапрĕ
Хĕвел ҫут хĕмне.
Кӳлĕ шывĕ ҫакрĕ
Кĕмĕл теветне.

Лӑпкӑ ҫил хускатрĕ
Вĕтĕ хумсене.
Тевет ҫинчен татрĕ
Ҫутӑ тенкине.

Вĕлт те вĕлт ҫухалчĕҫ
Татнӑ тенкисем...
Ак, каллех ҫуталчĕҫ–
Шыв ҫинчех вĕсем.

## ШĂЛЛĂМ ЫЛХАНĔ

Урок эп хатĕрлеттĕм
Сĕтелĕм хушшинче.
Пĕчĕкçĕ шăллăм темĕн
Сăнать хаçат çинче.

Часах сиксе вăл тăчĕ
Алри хаçачĕпе.
Ылмашнă сăнĕ-пичĕ
Темрен хăранипе.

Мĕнех çапла хăратнă,
Пăлхатнă шăллăма?
Çатăрласах вăл тытнă,
Ямасть ман аллăма.

Хаçат çинчи ӳкерчĕк
Хăех хурав парать.
Ман шăллăм евĕр пĕчĕк
Ача вилли выртать.

Тӳпенелле пăхаççĕ
Ун амăш куçĕсем.
Тавăрупа çунаççĕ,
Ылхан ярас вĕсем.

«Камсем, ăçта-ши, мĕншĕн
Вĕлернĕ ачана?»—
Шăллăм тĕпчет пĕлесшĕн,
Мĕнех калас ăна?

Ытла та пĕчĕк шăллăм.
Мĕнле ăнлантарам?
Çапах та эп каларăм:
«Халь вăрçă Вьетнамра».

Çунать унта рис уйĕ,
Çунать хула та ял.
Вьетнамăн пысăк хуйăх,
Вăл хуйăх—пирĕн халь.

Самолетсем нăрлаççĕ
Таса çӳл тӳпере.
Çут хĕвеле хуплаççĕ,
Вилĕм тăкаç çĕре.

Пиншер çынсем вилеççĕ,
Çĕр йынăшать вутра.
Агрессорсем пуяççĕ
Çак юнлă вăрçăра...

Ним айăпсăр куç хупнă
Сан пĕчĕк тантăшу.
Сан евĕрех вăл чупнă,
Вылянă, кулнă шух.

Ик чăмăрне хытарнă,
Йĕмест тек шăллăм ман,
Калать, калать васкавлăн,
Чĕтре-чĕтре, чунтан.

«...Ы-ых усал, каяннăй
Вĕлернĕ тусăма...
Аппа, атя каятпăр
Эпир те Вьетнама.

Тăшмансене кĕр! перĕп,
Эп хамăн пăшалпа...»
Чун лăпланма пĕлмерĕ,
Çунать вăл çулăмпа.

Вьетнам, сана ырлатпăр,
Чăн тĕрĕслĕх санра.
Çут чăнлăха мухтатпăр,
Чăнлăх çунмасть вутра.

Санпа пĕр май пулатпăр,
Ылхан, ылхан вăрçа!
Мĕнпур саспа калатпăр—
Мир пултăр пурнăçа!

## ЎКЕРЧĔК

Çĕнĕ пӳрт ӳкертĕм,
Турăм мăрйине.
Тухрĕ сар хĕвел те
Янкăр тӳпене.

Пĕлĕтсем шап-шурă,
Пысăк мĕлкисем...
Хумлă-хумлă тырă—
Анлă уй-хирсем.

Яштака шур хурăн
Лартрăм çăл умне.
Сад ӳкерсе хутăм
Чӳрече умне.

Татăк хут анчахчĕ
Тин çеç ман умра.
Пурнăç сăн-сăпачĕ
Чĕрĕлчĕ унра.

## ÇЫРЛАРА

Аслă вăрман уçрĕ
Ешĕл каррине.
Ман сукмакăм чупрĕ
Чăтлăх каррине.

Çут хĕвелĕ шелсĕр
Ăшшине тăкать.

Сулхăн, тӳсеймесĕр,
Тĕм хыçне тарать.

Вăрман имĕ-симĕ—
Хĕп-хĕрлĕ çырла.
Тутлă, ырă симĕç
Пирĕн тавралла.

Ăшă, ырă куншăн
Савăнать чĕре.
Кунтăк хыççăн кунтăк
Тулчĕ ĕшнере.



## ТИНĔС

Куçсем тулли тĕлĕнмелле илемлĕх!
Тӳпе таса. Хĕвел кулли çиçет.
Ман шухăш-кăмăл тинĕсе иленчĕ,
Кăвак тĕнче чĕнет инçе-инçе.

Халь тинĕс çийĕ тĕкĕр евĕр тикĕс,
Шăрçа сапать унта хĕвел шевли...
Хăш чух кăвак, хăш чух вăл тĕксĕм симĕс...
Çил çĕкленсен ун капланать çилли.

Асать, урать вăл чарăнма пĕлмесĕр,
Хура сăртсем пек инçетрен килсе,
Пĕрне-пĕри хуса иртсе, вĕç-хĕрсĕр
Килсе çапаççĕ çырана хумсем...

## АСАННЕ

Пĕррехинче, каçхине,
Ăшă чунлă асанне
Уçрĕ те шур арчине,
Чĕнчĕ мана хăй патне.

Кĕмĕл тевет, мăй çыххи,
Калпак, сурпан, пиçиххи,
Хĕрлĕ сатин кĕпине,
Сар саппунне хитрине,

Çут калушпа шур чăлха,
Пурçăн тутăр, ик çăмха,



Йĕппи-çиппи, канвине
Пачĕ мана—мăнукне.

Пур пурлăхне упраса
Усратăп-ха унăнне.
Спектакльте час-часах
Эп пулатăп «асанне».

# ЮМАХ

Умра куç тулли
Йăтăнать улми;
Туратти, вулли—
Витĕр курăнми!..

Ĕлĕкхи юмах
Халĕ, ак, умрах:
Çулçийĕ çупать,
Улмийĕ ташлать.





## ШУРĂ ХУРĂН

Вăрмана çитнине эп сисмерĕм
Пĕр чупса, пĕр утса пынипе.
Уçă сывлăш чуна çĕклентерчĕ,
Хĕмлентерчĕ симпыл тутипе.

Çарранах сывлăм тăрăх эп утрăм,
Ним туймарăм ура шăннине.
Уçланка эп çитсе чупрăм пытăм
Чун суйланă шур хурăн патне.

Ирхи сывлăм ăна илемлетнĕ,
Вăранмасть вăл пĕрех ыйхăран.
Çулçисем ун кăштах ĕнтĕркенĕ,
Пытанаççĕ пек темшĕн манран.

Ан вăтан эс манран, шурă хурăн,
Кашни ир эп кунта килнĕрен,
Кунти сывлăш мана кăмăл турĕ
Сывлăхпа вăй хушса кунсерен.

Ерипен шурăмпуç та шуралчĕ,
Çутă сăн вăл пиллет таврана.
Ыйхăран çамрăк хурăн вăранчĕ,
Лăпкаса ачашларĕ мана.

## КАПИТАН

Çап-çамрăк каччă—кÿршĕ Петĕр,—
Сартут тулли пичĕ çинче,—
Хĕл каçипе канма пĕлмесĕр,
Ĕçлерĕ тимĕрç лаççинче.

Ирпе ирех тăрса тухатчĕ,
Пиччĕшĕпе утатчĕ тан.
Комбайн халь юсавлă, хатĕр,—
Хире вăл тухрĕ паянтан.

— Аллу сан çăмăл,—терĕ пиччĕш,—
Тăр, капитан, штурвал умне...
Савăнăçпа йăл çиçрĕ пичĕ
Петян, илтсен ун сăмахне.

Чĕри кăлт-кăлт тапать... Тапранчĕ!
Сирсе сар тинĕсĕн хумне,
Ишет васкавлăн хир карапĕ,
Хушать паккус паккус çумне.

## КĔР-ХУДОЖНИК

Куç илмесĕр тăратăп пăхса
Чунăм савнă тăван таврана.
Кĕр-художник çавтер тăрăшса
Ĕçлени тĕлĕнтерчĕ мана.

Асамат кĕперри пек пуян
Тĕрлĕрен-тĕрлĕрен сăрăпа
Вăрмана вăл сăрланă паян,
Эрешленĕ асамлă майпа.

Ăвăссен хĕп-хĕрлех çулçисем,
Вутăн-хĕмĕн çиçеç ялкăшса.
Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçеççĕ вĕсем,
Пĕрин хыççăн тепри татăлса.

Ылтăна вăл пĕртте хĕрхенмен
Сăрламашкăн яштак хурăна.
Чи ĕçчен те маттур сар пикен
Сăнĕ пек аякран курăнать.

Пĕлĕте кармашан чăрăша
Кĕр-художник алли тĕкĕнмен.
Ешĕл симĕс йĕпсем тăрăшсах
Çурхилле тĕр тăваççĕ иккен.





## ВАТӐ ÇӐКА

Çил-тăвăл тулхăрса, ахăрашса
Чышкисемпе шаккать ман кантăка.
Салхуллăн халь ларать пуçне усса
Çурт умĕнче çаралнă ват çăка.

Ăна шеллетĕп эпĕ чĕререн,
Илсе кĕресчĕ ăшă пÿлĕме.
Çук, хăрамасть вăл тулăксăр çилрен:
Чăтать çăка—ман патăма кĕмест.

## ÇĔНĔ ЮР

Хĕл мучийĕ килсе çитрĕ
Инçетрен, Пăр çĕрĕнчен.
Кăпăшка юрпа вăл витрĕ
Таврана, кĕр сисиччен.

Шурă çĕлĕк тăхăнтарнăн
Курăнаççĕ юпасем.
Эрешленнĕ, капăрланнă
Таврари пур йывăççем.



## ÇĔНĔ ÇУЛ ТУЙĂМĔ

Ачасен ыйхи килмест паян:
Çĕнĕ çулваскать вĕсем патне.
Юрă янăрать халь ян та ян,
Хĕл мучийĕ валеçет парне.

Капăр елка пӳлĕмре çиççе
Йăлтăрать тем тĕрлĕ çутăпа.
Çывхарать мирпе телей илсе
Çĕнĕ çул васкавлă утăмпа.



Пилĕк юплĕ çăлтăр хĕм сапать,
Çутатать Çĕн çул килес çула.
Ак сехет вуникĕ хут çапать—
Ал парать кив çул Çĕнĕ çула.

Çĕн çулта çĕн ӳсĕмсем туса
Ӳстерер çĕршывăн хăватне.
Туслăн, харăс, çирĕппĕн утса
Çывхарар коммунизм патне.



## ÇУРКУННЕ АЛ ПАРАТЬ...

Вăрманпа васкамасăр утатăп.
Юр халь сĕлкĕш, путать лăштăрах...
Урара ман резина çут атă:
Çуркунне... алкумрах вăл тăрать.

Ыр хăнашăн ярах алăк уçă.
Кил хуçи—çутçанталăк хавас:
— Тĕпеле ирт, иртсем,—тет пек уççăн,—
Сана пурте кĕтеççĕ.
Хăва
Çепĕç кăчкă çурасшăн.
Хавассăн
Кайăксем çавăрасшăн йăва...



Сивĕ хĕл çеç сывлать ассăн-ассăн,
Куççульпе пит-куçне вăл çăвать.
Иксĕлет ĕнтĕ хĕлĕн вăй-халĕ.
Çуркунне ал парать таврана...

Çуркунне, сансăр тунсăхчĕ.
Халĕ
Тунсăх мар:
Çитрĕн эс хăнана!





## САДРА

Çурхи хӗвел кунран-кун
Ăшăрах кулать.
Епле чăтса тăрĕ чун,—
Ĕçлеме хушать.

Ĕçлесен вăл—чун уççи,
Пулас мар наян.

Ретĕн-ретĕн улмуççи
Лартрăмăр паян.

„Те Ваççи,—тет,—те Васси,—
Пĕр кайăк сасси.
Ĕçлемесĕр эс ан çи,
Ĕçле-ĕçле çи!“

## ТУСЛĂХ ХУРĂНĔ

Тапса тăран çăлкуç патне
Хĕвеллĕ ăшă ирпеле
Виç тантăш, туслăхăн ятне,
Шур хурăн лартнăччĕ пĕрле.

Ăш çил лăпканă ир çинче
Шур хурăнăн яштак пĕвне.
Вăл ўснĕ çулăн айккинче,
Сыхланă туслăх тĕввине.

Анчах пĕр путсĕр нишлĕ чун—
Алли епле çĕкленнĕ ун!—
Хуçса хăварнă унăнне
Черченкĕ çепĕç вуллине.

Çав йăрăс хурăн кăлăхах
Пулайрĕ ирсĕр чун кулли...
Анчах хуçаймĕ туслăха
Нихçан нимле тăшман алли.

Тапса тăран çăлкуç патне
Хĕвеллĕ ăшă ирпеле
Виç тантăш, туслăхăн ятне,
Çĕн хурăн лартрĕç халь пĕрле.

## ПĔЧЧЕН МАР

Тĕлĕрет тăван ял шăплăхра,
Çурт-йĕрсем, йывăçсем ыйхăра.

Уйăх çеç тӳпере мĕн ирччен
Сапалать таврана çут мерчен.

Çĕрлехи кăн-кăвак кантăка
Кĕмĕллет пайăркан-пайăркан.

Пӳлĕмре эп ларатăп пĕччен
Кĕнеке вуласа чылайччен.

Пĕччен мар, кĕнеке-тусăмпа
Калаçатăп хĕрӳ чунăмпа.





14 коп.



Для младшего школьного возраста

САРПИ РАИСА ВАСИЛЬЕВНА

# ПОДАРОК

Стихи. На чувашском языке

Художник *В. И. Агеев*

Редактор *В. О. Максимов*
Художественный редактор *А. А. Афиногенов*
Технический редактор *А. В. Лукина*
Корректор *Н. В. Васильева*

Сдано в набор 2/VI-1972 г. Подписано к печати 26/IX-1972 г. Изд. № 86/72. Формат 84x108 1/16. Бумага офсетная № 2. Физ. печ. л. 1,5. Усл. печ. л. 2,52. Учетно-изд. л. 1,97. Заказ 2906. Тираж 10000 экз. Цена 14 коп.

Чувашское книжное издательство, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР. Чебоксары, Володарского, 5.